Ыран – Медицина ĕçченĕсен кунĕ

# Яланах сывлăх хуралĕнче

Юлашки вăхăтра халăхăн сывлăхне сыхлас ĕç районта палăрăмлă утăмсем турĕ. Паллă ĕнтĕ, вĕсенчен чылайăшĕ «Сывлăх» наци проектне пурнăçа кĕртсе пынипе çыхăннă. Çакă вара вăл хальхи вăхăтра çĕршывра пысăк вăй пулса тăракан «Единая Россия» политика партийĕ хутшăнмасăр пулман. Кунпа пĕрлех çын факторне те манма кирлĕ мар. Хальхи вăхăтра районти тĕп больницăра хăйсен ĕçне аван пĕлекен специалистсем сахал мар ĕçлеççĕ. Кусем вĕсем Г.М. Огурцов хирург, Л.Н. Андреев травматолог, И.Ф. Королькова, Э.А. Фомина, И.С. Данилова терапевтсем, Н.А. Лобачева, С.Г. Васильева акушер-гинекологсем, Л.П. Огурцова офтальмолог, С.Г. Гусак отоларинголог, тĕп сестра М.Ю. Шарапова, аслă медицина сестрисем И.А. Софронова, С.В. Куликова, З.П. Иванова, Т.В. Васильева, медицина сестрисем Р. Толстова, А. Федорова, Г. Толстова, О. Захарова, А. Крылова тата ыттисем. Кунпа пĕрлех тĕп больницăри санитаркăсене те ырăпа палăртмалла. Пысăк укçа ĕçлесе илеймеççĕ пулин те, вĕсем хăйсен ĕçне чунтан пурнăçлаççĕ.

Районти 2-мĕш номерлĕ больницăра та медицина ĕçченĕсем хальхи вăхăтпа тан ĕçлесе пыраççĕ. Мăн Сĕнтĕр больницинче вăй хуракансем хăйсен ĕçне те, çынсен пурнăç хакне те аван пĕлеççĕ.

Пирĕн стационарсенче хальхи вăхăтра паракан пулăшу хуларинчен пĕртте кая мар. Юлашки çулсенче эпир уйрăмах амбулаторипе поликлиника пулăшăвĕ парасси çине ытларах тимлĕх уйăратпăр.

2006 çул «Сывлăх» приоритетлă наци проекчĕ пурнăçа кĕме тытăннă çулталăк пулчĕ. Унпа çыхăннă улшăнусене медицина ĕçченĕсем те, çĕршывра пурăнакансем те тахçанах кĕтнĕ.

Çĕршывра юлашки çулсенче демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру япăхса пыни вăрттăнлăх мар. Пĕр енчен ку вăл экономика тата социаллă улшăнусемпе те, тепĕр енчен вара сывлăха сыхлас ĕçре пухăннă проблемăсемпе те çыхăннă. Вĕсенчен пĕлтерĕшлĕреххисем: медицинăна ассигнование укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрманни, кивелсе çитнĕ пурлăхпа техника бази, медицина ĕçченĕсен ĕç укçи пĕчĕк пулни. Кунтах сывлăха сыхлас ĕçĕн профилактика енĕ çине, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси çине кирлĕ тимлĕх уйăрманни те витĕм кӳнĕ.

Пахалăхлă медицина пулăшăвĕ парасси тĕрлĕ сăлтавсемпе çыхăннă. Кунта чи пĕлтерĕшли вара пысăк квалификациллĕ ăста специалистсем хатĕрлесси пулса тăрать. Участокри терапевт сывлăха сыхлассин пуçламăш сыпăкĕнче тĕп фигура шутланать, вăлах «пациентăн медицина маршрутĕн» координаторĕ те. Çавăнпах ĕнтĕ проекта пурнăçа кĕртессин тĕп енĕсенчен пĕри пуçламăш сыпăкри медицина кадрĕсен професси ăсталăхĕн шайне палăрăмлă шая çĕклессипе çыхăннă. Районти тĕп больницăра иртнĕ çул 23 тухтăр тата 54 вăтам медицина ĕçченĕ наци проекчĕпе килĕшӳллĕн хăйсен пĕлĕвне ӳстерчĕ.

Участоксенчи тухтăрсемпе медицина сестрисен ĕç укçи шайне ӳстерме пăхнă. Шăпах ĕнтĕ медицина пулăшăвĕн пуçламăш сыпăкĕ çине ытларах йывăрлăх тиенет. Çывăх вăхăтрах участоксенчи терапевтсен, участоксенчи педиатрсен, пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕсен ĕç укçине палăртнă чухне çирĕплетсе панă вырăнти çынсен сывлăхне, кунпа пĕрлех квалификацие ӳстернин итогĕсене шута илме тытăнĕç. Çавăнпах ĕнтĕ амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетесси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Диагностика оборудованийĕсенчен пĕр пайĕ районти тĕп больницăна килсе çитнĕ ĕнтĕ, вĕсене вырнаçтарнă тата тухăçлă усă кураççĕ. Кусем вĕсем УЗИ, ЭКГ аппарачĕсем, рентген установки, эндоскоп, фиброколоноскоп т. ыт. те. Çĕнĕ оборудовани кăçал та килмелле.



*Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăн Юрий Михайлович Трофимов ертсе пыракан неврологи уйрăмĕнче хăйсен ĕçне аван пĕлекен пултаруллă коллектив тăрăшать.*

*Пĕрне мухтаса тепĕрне хурлама çук вĕсене – пурте хăйсен ĕçне чунтан паранна, ĕç стажĕ те вĕсен самаях пысăк. Калерия Леонидовна Алешина та сывалакансене пур енлĕ пулăшу пама яланах хатĕр.*

*О. СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

Васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмĕсемпе станцийĕсене хальхи çĕнĕ автотранспортпа тивĕçтермесĕр те май çук. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн районти тĕп больницăна иртнĕ çул хальхи оборудовани вырнаçтарнă васкавлă пулăшăвăн виçĕ автомашинине уйăрса панă.

Хальхи вăхăтра профилактика çине ытларах тимлĕх уйăрмалла: çынсен иммунизацийĕ, диспансеризаци, çуралнă ачасене пăхса тăрасси, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси. Наци проекчĕпе пăхса хунă пек çынсене вакцинаци тăватпăр. Унăн тĕллевĕ – çынсем В гепатитпа, хĕрлĕхенпе тата грипра чирлессине чакарасси, полиомиелит профилактики. 2006 çулта районта В гепатитран 5528 çынна прививка тунă.

Хушма диспансеризацин тĕллевĕ – çынсем вилесси тата инвалида тухасси патне илсе пыракан чирсене вăхăтра тупса палăртасси тата эффективлă сиплесси. Кунта вĕсене терапевт, эндокринолог, офтальмолог, невролог, хирург, уролог (арçынсене), акушер-гинеколог (хĕрарăмсене) тĕрĕслеççĕ. Кунпа пĕрлех лаборатори тата функционаллă тĕпчевсем те ирттереççĕ.

«Ача çуратаканăн сертификатне» те «Сывлăх» наци проекчĕн тĕп енĕсен шутне кĕртмелле. Унпа пăхнă мероприятисем хĕрарăмсен, ачасен сывлăхне сыхлассипе, сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче ача çуратакан хĕрарăмсене паракан услугăсен пахалăхне ӳстерме майсем туса парассипе çыхăннă. Çавна пулах тухтăрсен, сиплев учрежденийĕсен амбулаторипе поликлиника тата стационар сыпăкĕсен вăтам тата кĕçĕн медицина персоналĕн ĕç укçин шайне ӳстерме май килчĕ. Кунпа пĕрлех «Ача çуратаканăн сертификачĕпе» илнĕ укçа-тенкĕпе сиплев учрежденийĕсем кирлĕ чухлĕ медицина изделийĕсем туянаççĕ.

Пĕтĕмĕшле каласан, «Сывлăх» наци проектне пурнăçа кĕртсе пырса сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Анчах та тумалли ĕçсем те сахал мар. Çак ĕçе медицина ĕçченĕсемпе пĕрлех граждансен те активлă хутшăнмалла. Медицинăпа санитари пĕлĕвне сарасси, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси пирки самантлăха та манмалла мар. Паллă ĕнтĕ, проблемăсем те, татса паман ыйтусем те çук мар-ха. Анчах те пĕрле вĕсене пĕтĕмпех татса пама пулать тесе шутлатăп.

Май килнипе усă курса вара районти тĕп больница администрацийĕ тата хам ятпа медицина ĕçченĕсене çитсе килекен Медицина ĕçченĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп. Сире пурне те чăтăмлăх, ăнăçу, чун ăшши, ырату, сывлăх сунатăп.

**О. ПОПОВА,**
**районти тĕп больницăн поликлиника заведующийĕ.**

Милици хроникинчен

## Чышкă тытăмĕн "представителĕ"

Илем, хитрелĕх тĕнчене инкек-синкекрен çăлать теме хăнăхнă эпир. Анчах пурте ун пек шутламаççĕ иккен. Тĕслĕхрен, Ярапайкасси ялĕнчи Тĕп урамра пурăнакан 45 çулхи арçын тĕнчене тытса тăраканĕ чышкă тенĕ пулмалла. Çапла вара çакскер чышкă тытăмĕ мĕн тути пулнине тĕрĕслеме шутланă. Кам çинче тетĕр-и? Хăйне мĕн пĕчĕкрен пăхса ӳстернĕ амăшĕ çинче! Çак пӳтсĕр 74 çулхи амăшĕпе хирĕçӳ кăларать, хĕнет. Ку çеç те мар, мăйĕнчен пăвса вĕлерессипе хăратать. Нивушлĕ ун нимĕнле туйăм та юлман. Çапла вара 45 çулхи намăссăр пирки РФ УК 116 тата 119 статйисемпе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Халĕ ĕнтĕ пӳтсĕрле хăтланăвĕ пирки вăл йĕрке хуралçисене тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парĕ.

Акă тата Мăн Сĕнтĕрти обществăлла транспорт чарăнăвĕнче пулса иртнĕ пăтăрмаха мĕнле ăнлантарма пулать-ши? Шупашкар хулинче пурăнакан пĕр пӳтсĕр Уйкас Хачăкра пурăнакан 35 çулхи хĕрарăма тапса-çапса пĕтерет. Çапла вара 33 çулхи намăссăр пирки РФ УК 116 ст. уголовнăй ĕç пуçарнă.

## Суя шăнкăрав мĕн хака ларать?

Хăш-пĕр чухне шалти ĕçсен пайне суя шăнкăравсем килеççĕ. Çапла вара йĕрке хуралçисен вăл е ку вырăна тухса тĕрлĕ пăтăрмаха тĕпчеме, хаклă вăхăта сая яма тивет.

Акă майăн 31-мĕшĕнчи пĕр шăнкăрава илсе кăтартам. Телефонпа пĕр хĕрарăм калаçать: "16-17 сехетсенче паллă мар çынсем Малиновка вăрманĕ çывăхĕнче манăнне сумка вăрларĕç. Унта документсем тата укçа пурччĕ." Мĕнех, пакунлисем кашни шăнкăравах тĕпчеççĕ, айăплисене шыраççĕ. Ку хутĕнче те йĕрке хуралçисем вăрăм çула тухаççĕ. Анчах та яка чĕлхеллĕ тăхлачă суйма шутланă. Пăтăрмаха тăрă шыв çине кăларнă май çакă паллă пулнă. Сумкăна никам та вăрламан, укçи те хăй каланă чухлĕ пулман. Ăна хăй тимсĕрлĕхне пула çухатнă. Хăш чухне çамрăк ăрăва суйнăшăн, улталанăшăн ятлатпăр, кунта вара 58 çулхи çын та суйма именсе тăман. Çапла вара Юрпаш тăхлачи пирки РФ УК 306 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă. Çавăнпа та шалти ĕçсен пайне шăнкăравличчен тĕплĕн шутласа пăхасчĕ, унсăрăн ӳкĕнмелле пулĕ.

## Вăрă çулĕ такăр çул мар

Çивĕч куçлансах кайрĕç пулмалла юлашки вăхăтра çынсем. Нимĕн те сая ярасшăн мар. Вăл е ку япала хăйĕн мар иккенне те пăхса тăмаççĕ. Ал айне лекнĕ пек чухне пĕтĕрсе чикеççĕ кĕсьене. Ал айне лекеймесен те аптăрасах тăмаççĕ, çав-çавах шыраса тупаççĕ.

Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Уйкас ялĕнчи Тĕп урамри 44 çулхи арçын çак урамрах пурăнаканăн хуçалăхне кĕрет. Паллах, ырă шухăшпа мар, усал шухăшпа. Çапла вара тырă авăртмалли "УД-170" маркăллă армана вăрласа тухать. Çак ĕç 15 сехетре пулса иртнĕ. Халĕ вара ун пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă.

Коллективлă садри çуртсене тăтăшах «кукăр алăллисем» кĕрсе тустараççĕ. Ахаль тухмаççĕ, мĕн те пулин пĕçертсе тухаççĕ. Вăрă куçĕ ытла çивĕч пулас, йăлтах асăрхать. Акă "Пищевик" коллективлă садри пĕр çуртра ытла та нумай тустарнă. Çапла вара пысăк пурлăх умне тухнă вăрă кашни 10 метр тăршшĕллĕ пилĕк чĕрке рабица сетка, "Малыш" шыв насусĕ тата ытти инструментсем илсе тухать. Халĕ çакăн пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă. Акă еплерех вăл вăрă çулĕ – кĕске çул.

**Пичете шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**


с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5. Тел.: 2-13-80




Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем керамзитобетонные блоки, шифер, рубероид, доски, кирпич, песок, гравмассу. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки. Дешево.**
**Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02. 2-2.**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СОЮЗ КРЕДИТНЫХ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИХ КООПЕРАТИВОВ ГРАЖДАН
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
14 - 30 % годовых
Наше представительство в с. Моргауши филиал КПКГ "Агрокредит":
ул. 50 лет Октября, д.23, тел. 2-18-13
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

**Доставка красного и силикатного кирпича, цемента из завода.**
**Телефон: 8-903-065-58-68. Цены договорные. 4-5.**

**Продаю автомобиль Москвич 1986 г. выпуска в хорошем состоянии, на ходу (двигатель после капитального ремонта), требуется мелкий ремонт кузова или меняю на красный кирпич 1000 шт. не битый. Телефон: 8-903-389-61-27.**

**ВНИМАНИЕ! ТОЛЬКО ОДИН ДЕНЬ!!!**
**19 июня с 10 до 18 часов в РДК безболезненное прокалывание ушей медицинским пистолетом.**

**Куплю однокомнатную квартиру в с.Моргауши.**
**Тел.(8352)62-55-99, 8-908-304-10-50.**

**Требуются для работы в Нижегородской области: каменщики, штукатуры, бетонщики, плотники, сварщики, разнорабочие. Условия проживания: трехразовое питание. Оплата сдельная. Также покупаем сено.**
**Телефон: 8-906-133-67-72. 2-2.**

**Аттестат о среднем образовании, выданный Юськасинской средней общеобразовательной школой в 2003 году Б № 0754270 на имя Яковлевой Надежды Анатольевны, считать недействительным.**



ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Заместитель главного редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3611.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 15.06.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.